Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НĂРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N2 (4571) *1998 çулхи январь (кăрлач) уйăхĕн 7-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Çĕнĕ хыпарсем

### Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине - çĕнĕ продукци

Çитес çывăх вăхăтра Нăрлатри машзавод выльăх-чĕрлĕх объекчĕсем валли çĕнĕ оборудовани туса кăларма пуçлĕ. "Нăрлат" агрофирма заказĕпе пурнăçланă автопоилкăсенчи шыва ăшăтмалли виçĕ хатĕр заказчиксене килĕшрĕ. Çарăмсан районĕнчи хуçалăхсен ертӳçисем те агрегата хăйсем курнă хыççăн заказсем панă.

### Газ ялсене килет

Районти ялсене газификацилемелли программăри ĕç калăпăшĕ пысăк, условисем кăткăс пулин те, газ кĕртнĕ ялсен шучĕ ӳссе пырать. Çак кунсенче патшалăх йышăну комиссийĕ Якаел ялĕнчи 6 километр тăршшĕ газопровода хута яма ирĕк панă. 120 çурт тата хваттер "сенкер" топливăпа усă курма пуçланă. Район ертӳçисем тăрăшнипе газ кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерме май пулнă. Çитес çывăх вăхăтра Хумаел ялне те çутçанталăк газĕпе çыхăнтарĕç, халлĕхе унта газ çук-ха. Тата темиçе ялта хăйсем патне "сенкер" çутă çитессе чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, анчах та юлашки сăмаха патшалăх комиссийĕ калĕ.



*Машинăсен тухтăрĕ, хресченсен хуçалăхĕсен "Игенче" ассоциацийĕн техникăна пăхса тăракан пункт заведующийĕ Рахимзян Валиуллин çинчен эпир хаçатра пĕрре мар çырнă ĕнтĕ. Тен, вăл хăйĕн тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланине хăшĕ-пĕри шанмасть те. Нумаях пулмасть хуçалăхра иртнĕ семинара хутшăннă районти хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсен хушшинче те техникăна пăхса тăрассине пĕтĕм требованисемпе килĕшӳллĕн ирттересси пирки иккĕленекенсем сахал марччĕ. Анчах та Рахимзян пичче (ӳкерчĕкре) ку е тепĕр ял хуçалăх машинине хăçан тата миçемĕш хут юсав иртнерине питĕ тĕплĕн çырса пынă журнала курсан, иккĕленӳ сирĕлчĕ. Чăнах та техникăна ялан пăхса юсаса тăмалла. Çак ĕçе тĕрĕслесе тăракан ăслă, техника тĕплĕ пĕлекен, тирпейлĕ хуçа пулсан лайăх ĕнтĕ. "Игенче" хуçалăхра çак ĕçе шăп çапла йĕркеленĕ. Унсăр пуçне çунтармалли-сĕрмелли материалсене те Рахимзян пичче хушмасăр памаççĕ.*

*Ку е тепĕр трактор, машина палăртнă техухода иртмен пулсан, маçтăртан горючи е çу талонне илме ан шутла та. Кашни ĕçĕн ăнăçлăхĕ йĕркелĕхрен килет çав.*

## Çĕнĕлле пуранатпăр тата ĕçлетпĕр

Иртнĕ çулхи акана эпир виçĕ кооператива пĕрлешсе иртертĕмĕр. Халиччен те-ха çапла ĕçлетпĕр, саланса каймаа шутламастпăр. Унтанпа хуçалăхра чылай улшăнусем пулчĕç - çынсем çĕр, хăйсен ĕçĕ, тупăш çине урăхла пăхма пуçларĕç. Çаксем пурте кооперативсем ăнăçлă ĕçленине кăтартаççĕ. Уйрăмах çĕр ĕçĕнче пысăк кăтартусем турăмăр - уйрăмах пĕрчĕллĕ культурăсен пуян тухăçĕ савăнтарать. Тĕслĕхрен, çурхи тулла пĕр гектартан 42 центнер пухса илтĕмĕр, урпана - 53 центнера яхăн. Кусем вăтам кăтартусем, хăшпĕр кооперативсенче вĕсем тата та пысăкрах. Ильхам Хафизовăн бригадинче тĕштырăсен тухăçĕ ăнса çитĕнчĕ пулсан, эпир выльăх апачĕсен запасне чылай хатĕрлерĕмĕр. Ильяс Мингалимов кооперативĕн ĕçченĕсем сахăр кăшманне акса çитĕнтернисĕр пуçне, кукуруза та тырăлăх ӳстерчĕç. Юлашкине илсен, эпир ăна хамăрăн техникăпа пуçтарса илнине палăртса хăварма та кăмăллă, çавăнпа та симĕс массăн пысăк пайне траншейăсене хыврăмăр.

Кооперативсен пĕлтерĕшĕ пысăк кăтартусенче çеç кăна мар, çынсен психологийĕ те улшăнчĕ, вĕсем хăйсем тĕллĕн, яваплăх туйса вăй хума, хăйсен ĕçĕн кăтартăвĕсене хаклама вĕренчĕç. Хальхи вăхăтра эпир улăма хиртен ял çывăхнелле сĕтĕретпĕр - çак ĕçе пирĕн гусеницăллă тракторсене юсава лартиччен вĕçлемелле. Çаплах ĕçрен пушаннă ял хуçалăх техникине те юсатпăр. Çаклатса ярса ĕçлекен хатĕрсене виçĕ кооперативăн представителĕсем пĕрлешсе юсаççĕ.

Эпир кăçал та пĕлтĕрхи реформăсен çулйĕрĕпе малалла шанчăклăн ĕçлеме шутлатпăр, çурхи акана кооперативсен составĕпе тухăпăр.

**С.МИНАЗЕТДИНОВ,**
**хресченсен хуçалăхĕсен "40 лет Победы" ассоциацийĕнчи кооператив председателĕ.**

### Тимлĕ пулăр: конкурс!

Район администрацийĕ Нăрлат хулин гербне тăвас тĕлĕшпе конкурс иртересси çинчен пĕлтернĕ. Гербра хула ячĕ, историйĕ, аталану уйрăмлăхĕсем палăрмалла. Тĕплĕнрех 2-10-71 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.

## Каллех океан леш енне - Америкăна

Хаçата вулакансем Людочка Игнатьевăн шăпи çинчен лайăх пĕлеççĕ. Америкăри Родион Нахапетов ертсе пыракан хĕрхенӳлĕх фончĕ "Туслăх" хăйĕн пулăшăвне сĕннĕ чухне Людочка сывалассa шанчăк та пулман. Ăна амăшĕпе Мария Валентиновнăпа пĕрле океан леш енне чĕннĕ, унта хĕрачан чĕрине операци тунă. Çавăнтанпа икĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Халь Люда хулари 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта иккĕмĕш класра вĕренет. Вăл сывлăхлă ӳсет, шухăскер. Иккĕмĕш чĕрĕке "5" паллăсемпе пĕтерне. Фонд ертӳçи Р.Нахапетов вĕсен çемйипе паян та çыхăну тытать.

Декабрь уйăхĕнче Игнатьевсем каллех Америкăна кайма йыхрав илнĕ. Вĕсене операци тунă Стефан Горден курасшăн. Çемье финанссем енчен йывăрлăхсем тӳснине ăнланса, фонд мĕнпур тăкаксене хăй çине илме шутланă. Игнатьевсене вара океан леш енче март вĕçĕччен пурăнма тӳр килĕ.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче, Хусана килнĕ вăхăтра, Р.Нахапетов вĕсене, çаплах медицина пулăшăвĕ панă ытти пилĕк ачана тĕлпулăва чĕннĕ. Вăл питĕ савăнăçлă та хумханулла пулнă, ашшĕ-амăшĕсем вара чунчĕререн тав тунă.

- Вĕсем манăн ачасем вĕт, - тенĕ Нахапетов, вĕсене ыталаса.

Родион Нахапетовăн фончĕ ачасене пулăшсах тăрать. Пĕлтĕр тĕп телевиденипе кăтартнă "Чун суранĕ" ятлă документлă фильм куракансене çав тери кăсăклантарнă. Хальхи вăхăтра кĕнеке пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ. Родион Нахапетов, ачасене пурнăç савăнăçĕ парнеленĕскер, вĕсен шăпишĕн хăй яваплă пулнине паян та туять.

**С.НУРУЛЛИНА.**

### Çĕнĕ председатель суйланă

Нумаях пулмасть хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк" ассоциацийĕнче пĕрлехи пуху пулса иртнĕ, унта йĕркелӳ ыйтăвне пăхса тухнă. Пуху В.И.Гавриловăн заявленине тĕпе хурса, ăна ассоциаци председателĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă.

Кооперативсен "Урняк" ассоциацийĕн совечĕн председателĕ пулма Ислам Салихович Сафиуллина суйланă.

Унччен вăл "Агрохимсервис" уçă типлă акционер обществин генеральнăй директорĕн тивĕçтерӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулнă.

## КУН хыççăн КУН

### Чулпанта - кĕрешӳçĕсем валли çурт

Спортпа, уйрăммăн илсен, наци кĕрешĕвĕпе туслă Чулпан ачисен çитес çулсенче хăйсен çурчĕ пулĕ. Проектпа спорт залĕ, сауна, бассейн тума пăхса хăварнă.

### Активистсене - "Мирас" лагере

Ĕнер районти шкулсенче вĕренекенсем - отличниксемпе активистсем хĕллехи каникул вăхăтĕнче Хусанти "Солнечный" лагерь бази çинче ĕçлекен "Мирас" профиллĕ лагере тухса кайнă. Путевкăсене вĕрентӳ министерствин республикăри шкул тулашĕнчи центрĕ тӳлевсĕр уйăрса панă.

### "Подросток" алăксене уçнă

Хĕллехи каникул вăхăтĕнче РОО çумĕнчи "Подросток" профиллĕ лагерь каллех ачасене йышăннă. Кунта музыкăпа, рисованипе интересленекен, тутар тата акăлчан чĕлхине вĕренекен ачасем канаççĕ.

Çав вăхăтрах çула çитмен çамрăксем валли интереслĕ те илĕртӳллĕ программа хатĕрленĕ: пушă вăхăтра кунта тĕрлĕ мероприятисем иртереççĕ.

### Депутатсене пĕлсе тăма

**1998 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче 9 сехетре администрацин конференц-залĕнче халăх депутачĕсен Нăрлат район Совечĕн черетлĕ вунтăваттăмĕш сессийĕ пулать.**

**Кун йĕркине çакăн пек ыйтусем кĕртнĕ:**

**1. 1997 çулхи район бюджетне пурнăçлани çинчен.**

**2. 1998 çулăн район бюджечĕ çинчен.**

**3. Халăх депутачĕсен Нăрлат район Совечĕн тата унăн президиумĕн 1998 çула палăртнă тĕп мероприятийĕсен планĕ çинчен.**

РАЙОН СОВЕЧĔ.

### * Ҫемье календарӗнчи дата

# Юратуран та пысӑкрах...

Красновсен ҫемйинче праҫниксем час-часах иртеҫҫӗ, ҫапах та хальхинчи пек ӑшӑ, кӑмӑллӑ уяв тахҫанах пулман. Хӑнасене ура ҫинче тӑрса хӑналама хӑнӑхнӑ кил хуҫисем ку хутӗнче кӗрекере малти кӗтесре ларатчӗҫ. Хӑнасенчен кунта мӗнпур Красновсем пухӑннӑ: пӗчӗккисенчен пуҫласа ваттисем таранах, мӑнукӗн виҫӗ ҫулхи хӗрӗ Маша та пуринпе пӗрле сӗтел хушшине вырнаҫнӑ. Мӗнле кӑна саламсем пулмарӗҫ, мӗн кӑна сунмарӗҫ юбилярсене: аслӑ кинӗ Зинаида хуняшшӗпе хунямӑшне вӗсен ывӑлӗшӗн, унӑн мӑшӑрӗ пулса тӑнӑскершӗн, тав турӗ, вӑл лайӑх ҫын пулни ашшӗ-амӑшӗнчен нумай килет-ҫке, Красновсен ҫемйине нумаях пулмасть килнӗ иккӗмӗш кинӗ Елена вара ҫакӑн пек ҫемье тата тӑвансем тупнӑшӑн шӑпана тав турӗ, вӑл вӗсенче шанчӑклӑ хӳтлӗх курать.

Туйӗ ылтӑн пулсан та, йӑлана кӗнӗ "йӳҫӗ" сӑмахсӑр иртмерӗ.

Тӑванӗсемпе ҫывӑх ҫыннисем вӗсем ҫине ҫеҫ пахнипе хӗрелсе кайнӑ Агафья Васильевна пӗр самант тӑхтаса тӑнӑ хыҫҫӑн мӑшӑрне хулпуҫийӗнчен ыталарӗ те пӗркеленчӗк тата именчӗк питӗнчен чуптуса илчӗ. Кузьма Васильевич кӑна вырӑнӗнчен тӑраймарӗ: унӑн ырӑ, юратупа ҫиҫсе тӑракан куҫӗсене куҫҫуль хупларӗ. Ҫара уран чупнӑ, выҫӑ ачалӑхӑн, вӑрҫӑ вӑхӑчӗпе тӳр килнӗ ҫамрӑклӑхӑн куҫҫулӗсем пулчӗҫ вӗсем. Ҫак асаилӳсенчен чи йывӑрри, паллах, аманни, ҫавна пула урине ҫухатни. Акӑ 53 ҫул ӗнтӗ Куьзма Васильевич протезпа ҫӳрет.

Кузьман яшлӑхӗ йывӑр пурнӑҫпа тӳр килнӗ. Вӑрҫӑ пуҫлансанах вӗренӗве пӑрахса, колхозра бригадир пулса ӗҫлеме тытӑннӑ. Пиччӗшӗсене, Пименпа Аркадие пӗрин хыҫҫӑн теприне вӑрҫа ӑсатнӑ. Пӗрремӗшӗ вилнӗ, теприи хыпарсӑр ҫухални ҫинчен пӗлсен, унӑн тӑшманпа ҫапӑҫма каяс шухӑшӗсем ҫирӗпленнӗ ҫеҫ. Шӑп пӗр уйӑхран, ноябрӗн 13-мӗшӗнче вунҫиччӗ тултарсан, вӑл ҫар комиссариатне пынӑ.

- Мана фронта ярӑр, - хуллен те ҫирӗппӗн каланӑ каччӑ. Тен, ҫирӗп калани килӗшнӗ, ӑна шаннӑ. Ун чухне 1942 ҫулхи сивӗ декабрь уйӑхӗ пулнӑ, хӗрӳ вӑрҫӑ вӑхӑчӗ.

Каччӑ хӑйӗн сӑмахне тӳрре кӑларнӑ. Харсӑррӑн, хӑюллӑн ҫапӑҫнӑ нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ. Венгрие ирӗке кӑларнӑ чухнехи ҫапӑҫусенчен пӗринче йывӑр аманнӑ. Венӑри госпитальте ҫеҫ тӑна кӗнӗ. Ҫавӑнтах ҫӗнтерӗве кӗтсе илнӗ. Пӗр вӑхӑтрах савӑннӑ та, хуйхӑрнӑ та. Ҫӗнтерӳшӗн савӑннӑ, вӗсем салтаксем, ӑна кунӗн-ҫӗрӗн кӗтнӗ-ҫке. Анчах та салтакӑн урине касма тивни канӑҫ паман. Кама кирлӗ вӑл урасӑр... Мӗнле кӑна йывӑр шухӑшсем кӗмен ун пуҫне. Ҫапах та хӑйне ҫирӗп тытнӑ. Ҫавӑнтах бухгалтерсемпе хурт-хӑмӑр ӗрчетекенсен курсӗсене ҫырӑннӑ, вӗсене кунтах, госпитальте, йӗркеленӗ пулнӑ. Хӑйӗн хуйхи ҫинчен нумай вӑхӑт хушши ашшӗ-амӑшне те пӗлтермен. Вӗсем вара хыпар паман ывӑлне мӗнпур ҫӗрте шырама пуҫланӑ. Унпа пӗртӑван Лена Ломбах штабӗн начальникӗ патне ыйтса ҫырса янӑ. Унӑн хуравӗ кӗске пулнӑ:

- Пӗлтер, приказ пурнӑҫлани ҫинчен кайран ...

Тӑван Хӑмӑшлӑ ялне Кузьма 1945 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче хӑйне ӑсатаканпа таврӑннӑ. Ӑна хуйхӑпа асапсенчен ывӑнса ҫитнӗ салтак амӑшӗсем, тӑлӑх арӑмсемпе ачасем кӗтсе илнӗ. Ҫитменнине тата - выҫлӑх, сивӗ, пушанса юлнӑ ҫуртсем... Пурӑнмалла, апла пулсан ӗҫлемелле. Йывӑр протезпа вӑл тӗрлӗ ҫӗре ӗҫлеме ҫӳренӗ, учетчика пулӑшакан та пулнӑ. Каччӑ авланма та хирӗҫ пулман, анчах та ҫакӑн ҫинчен шутласанах ҫан-ҫурӑмӗ сӑрӑлтатса илнӗ: хӑрах уралласкере кам юратӗ-ши? Куҫ хывнӑ хӗрӗ те пулнӑ, вӑл кӳршӗ ялтан тӑванӗсем патне хӑнана килнӗ. Ҫаврака питлӗ, хураскер, чиперкке, вӑрварскер. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл лашасем пӑхнӑ. Анчах та хӑйӗн пурнӑҫне уксах-чӑлахпа ҫыхӑнтарма пултарӗ-ши? Кузьма ашшӗ-амӑшӗпе канашланӑ та авланма шут тытнӑ.

- Хамӑн вӑя шаннӑ, ҫавӑнпа ӑна качча тухма килӗшрӗм, - тет халь Агафья Васильевна.

- Эпӗ ун чухне ҫирӗмреччӗ, ӗҫлес килсе кӑна тӑратчӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн суйламалӑх каччӑ та ҫукчӗ.

Ҫамрӑксен пӗррремӗш ачи - Юра ҫуралнӑ. Тепӗр куннех Кузьма Якаел шкулне 9-мӗш класа вӗренме кайнӑ. Виҫӗ ҫул ҫӳренӗ вӑл ҫав ҫулпа: ҫуран та, мотоциклпа та. Шкула кӗмӗль медальпе вӗренсе пӗтерсен ун умӗнче пӗтӗм ҫул уҫӑ иккенне ӑнланса документчӗсене Мелекесри пединститута панӑ. Шӑпах ҫакӑнта вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн 33 ҫул педагогра ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Мичурин ячӗпе хисепленекен колхоза пилӗк ҫул ертсе пыни унӑн шӑпинче кӑна мар, хуҫалӑх историйӗнче те тарӑн йӗр хӑварнӑ. 257 пин тенке парӑма кӗнӗ хуҫалӑха укҫан тӳлесси ҫине республикӑра чи малтан куҫарнӑ. Миллионлӑ тупӑш илекен хуҫалӑх тунӑ.

Райкомра инструктор пулса ӗҫленӗ, ытти яваплӑ вырӑнсене йышӑннӑ вӑхӑтра та хӑйӗн коммунист принципӗсене улӑштарман, ҫынлӑха ҫухатман.

Кил-ҫуртпа хуҫалӑха йӑлтах хӑй ҫине Агафья илнӗ, унта яланах тирпей пулнӑ. Ӗҫре ҫӳлерех те ҫӳлерех вырӑнсене йышӑнкан упӑшкине чӑрмантарман. Лайӑх мӑшӑр, анне, хуняшшӗпе хунямӑшӗшӗн вара - кӑмӑллӑ кин. Килте те, колхозра та ӗлкӗрнӗ, кирлӗ пулсан, ҫывӑрасси ҫинчен те маннӑ.

- Кӑшт кан ӗнтӗ, кулак хӗрӗ, - ӗлӗкхине аса илтерсе шӳтленӗ Кузьма. Агафья Васильевна хӑйӗн шӑпине урасӑр ҫынпа ҫыхӑнтарнӑшӑн ӳкӗнмест. Мӗншӗн тесен савӑнӑҫлӑ, телейлӗ самантсем пурпӗрех нумайрах пулнӑ. Ҫемье пуҫлӑхӗ ҫемьене ҫирӗп тытнӑ. Кузьма хӑйӗн мӑшӑрне нихӑҫан та пӗччен хӑварман: санаторисене, кану ҫурчӗсене яланах пӗрле ҫӳренӗ. Вӑрҫӑри юлташӗсемпе иртттернӗ тӗлпулусене те пӗрле илсе кайнӑ. "Туслӑх" хаҫат страницисенче Ф.Нуруллин "Ӑҫта эсир, пӗр полкри ҫар ҫыннисем?" чӗнсе каланине пичетленӗ хыҫҫӑн, 1980 ҫулта тӗл пулма пуҫланӑ вӗсем. Ҫавӑн чухне Кузьма Раменское хулине тӗлпулӑва кайма шутланӑ. Батарея командирӗпе Павел Яковлевич Комарнӑйпа вӗсем халӗ те туслӑ. Каярах тӗлпулусем Хӑмӑшлӑра пулнӑ. Вӑрӑм калаҫусем, аякри юлташа хӑналани...

- Ватлӑх хӑйӗн ҫинчен виҫӗ ҫул каялла ҫеҫ систерчӗ. Вӑй-хал чакрӗ, анчах та чун ватӑлмасть, питӗ пурӑнас килет. Ачасем шанӑҫ параҫҫӗ мана, вӗсемшӗн ҫын умӗнче хӗрелме тӳр килмен.

Ку чӑнах та ҫапла. Ачасене амӑшӗ ытларах пӑхнӑ ӗнтӗ, ҫапах та вӗсен ҫирӗп кӑмӑлӗ ашшӗн. Аслӑ ывӑлӗ, Юрий, Пӗкӗлмери техникумра вӗреннӗ, халӗ НГДУра мастер пулса ӗҫлет. Хӗрӗсем Эльвинӑпа Аля мӗнпур енчен пултаруллӑ ӳссе ҫитӗннӗ. Слава Тимирязев ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх академине пӗтерсен, Раҫҫей Федерацийӗн ял хуҫалӑх министерствинче ӗҫленӗ. Халӗ Нӑрлатра пурӑнать. Кашнин хӑйӗн ҫемйи. Тата ҫичӗ мӑнук ӳсет - хӑйсем пекех пысӑк куҫлӑ, кӑтра ҫӳҫлӗ. Ашшӗ-амӑшӗн сӑмахӗ аслисемшӗн те, кӗҫӗннисемшӗн те - закон. Красновсен ҫемйине ялта та питӗ хисеплеҫҫӗ. Йывӑр лару-тӑрура ҫынсем вӗсем патне пулӑшу, канаш ыйтма, ахаль ҫеҫ калаҫма та пыраҫҫӗ. Юбилей кунӗ вӗсен ҫуртне ассоциаци председателӗ И.Н.Мухамметов та кӗнӗ.



Тунсӑх пуснӑ вӑхӑтра Кузьма Васильевич мандолина тытать. Ӑна часах тӑмрапа улӑштарать, мӑнукӗсене ҫавӑ ҫеҫ кирлӗ: вӗсем хаваслӑн ташлама тытӑнаҫҫӗ. Вӗсене пӑхса вӑл иртнине аса илет, 1942 ҫулта ӳкернӗ сӑнӳкерчӗкне кӑларать, унта вӑл ҫамрӑк та тӗрӗс-тӗкел.

Сӑнӳкерчӗке тытса макӑрса ярӗччӗ, анчах та ҫакӑ арҫын йӑлийим? Куҫҫульне шӑлса илсе, хӑйӗн яланхи туйӑмне тытса кухньӑна утать. Плита умӗнчи мӑшӑрне курса лӑпланать, питӗнчи пӗркеленчӗкӗсем те якалнӑ пек туйӑнаҫҫӗ.

- Юрать-ха эсӗ пур манӑн.

Ҫак сӑмахсенче юрату та, ҫур ӗмӗр пӗрле пурӑннӑ чи ҫывӑх ҫынна тав туни те.

**Р.ГИНЯЕВА.**

**Ӳкерчӗкре: Красновсем**

**Н. Азизов сӑнӳкерчӗкӗ.**

---

### * Редакци почтинчен

## Тӗнчере ырӑ ҫынсем пур ҫке-ха

Пирӗн Тукай урамӗнчи ҫурт виҫӗ ҫул каярах ҫунса кайрӗ. Манӑн мӑшӑр вутра вилчӗ. Ҫак йывӑр вӑхӑтра мана тӑвансем, кӳршӗсем, эпӗ ӗҫленӗ предприятин ертӳҫи тата коллектив пулӑшрӗ. Мӑшӑра пытарма та вӗсемех пулӑшрӗҫ, завод ертӳҫи общежитире пӳлӗм уйӑрса пачӗ. Л.Захарова комендант, питӗ лайӑх та ырӑ кӑмӑлласкер, вӑл яланах пулӑшма хатӗр. Кӑҫал пире ывӑлпа иксӗмӗре Ленин урамӗнчи кивӗ ҫуртра пӗр пӳлӗмлӗ хваттер пачӗҫ. Ӑна юсамаллаччӗ, ҫавӑнпа эпӗ заводӑн ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх пайӗнчен пулӑшу ыйтрӑм. Унӑн начальникӗ А.М.Кончев пӗр тӑхтаса тӑмасӑр Х.Гайсина ертсе пыракан штукатур-малярсен бригадине ячӗ. Хам эпӗ халь пенсире, хӗрсене тавтапуҫ, вӗсем хӑйсен тивӗҫӗсене питӗ лайӑх пурнӑҫларӗҫ, юсав ӗҫӗсене мансӑрах турӗҫ. Эпӗ мана пулӑшакан ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсене пурне те тав тӑватӑп, уйрӑмах сахӑр завочӗн директорне А.К.Савинова. Вӗсене ҫирӗп сывлӑх тата ҫемьере телей сунатӑп.

**Р.ГУБАЙДУЛЛИНА.**
**Нӑрлат хули.**

## *Чӑваш халӑх поэтне чысланӑ*

Пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ, раштавӑн 26-мӗш кунӗнче Чӑваш халӑх поэчӗ, РФ тата ЧР культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Митта Ваҫлейӗ ячӗллӗ преми лауреачӗ В.И.Давыдов-Анатри ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитрӗ. Вӑл кӑларнӑ 40 ытла сӑвӑ-юрӑ, юмах-калав кӗнекине эпир (пурне те мар пулсан та хӑшне-пӗрне) тытса курнӑ, вуланӑ. Тӗслӗхрен, "Чеменпе Мерчен" кӑна мӗне тӑрать.

Паллӑ кун ячӗпе Василий Ивановичпа унӑн мӑшӑрне Мария Максимовнана ЧР Президент Администрацийӗн, ЧР Патшалӑх Канашӗн, ЧР Культура министерствин, Патӑрьел район администрацийӗн ӗҫченӗсемпе пӗрлех ӗҫтешӗсем, тӑван Юхма енчен килсе ҫитнӗ тус-тӑванӗсем, ӗҫӗхӗлне хисеплекенсем ӑшшӑн саламланӑ. Украинӑри поэт-писательсем янӑ саламлӑ телеграммӑна илме те, паллах, питӗ кӑмӑллӑ пулнӑ. "Шухӑшӑр яланах ҫирӗп пултӑр, кӑвар пек ялкӑшса тӑтӑр, сассӑр Атӑл урлӑ, тинӗс урлӑ ян! кайтӑр, таҫта та ҫиттӗр", - тенӗ пухӑннисен шухӑшкӑмӑлне пӗтӗмлетсе Литература музейӗн ертӳҫи И.Иванова. "Эсир хисеплени мана сума суни кӑна мар, ҫакӑ тӑван литературӑна хисеплени тесе шутлатӑп", - палӑртнӑ Чӑваш халӑх поэчӗ.

Паллӑ куна халалласа ЧР Литература тата Наци музейӗсенче ятарлӑ куравсем те уҫӑлнӑ. Ҫакӑн пек чыс-хисепе чӑннипех те тивӗҫлӗ пирӗн "шур сухаламӑр".

**Л.ФИЛИППОВА.**

# Христос хăçан çуралнă?

Раштав умĕнхи каç. Авалтан йăлана кĕнĕ йĕркепе христиансем пурте ăна чиркÿсенче ирттерессĕ. Анчах çакна тĕплĕнрех палăртасчĕ: хăçан пулнă вăл? Историре чăннипех пулнă-и татах?

Евангелире çырни Турă Ывăлĕ çĕр çине килнĕ лару-тăрава пĕтĕмпех чылаях тĕплĕн пĕлтерет. Иосифпа Мария Назаретра пурăннине пăхмасăрах, Иисус Христос Вифлеемре çуралнă. Халăх перепиçне ирттересси çинчен пĕлтернĕ, çавăнпа Иосиф хăйĕн ачи çураласса кĕтекен Марийăпа пĕрле, закона пурнăçлас тесе, хăйсен ашшĕ-аслашшĕсен хулине тухса кайнă. Унта çынсем питĕ нумай пухăннă, хăна çуртĕнче вырăн тупма май килмен. Акă мĕншĕн вĕсен Вифлеем айккинче, кĕтÿçсем выльăхсене тытакан çĕр хăвăлĕнче чарăнма тивнĕ. Çуралнă ачана выльăхсене апат паракан куритене вырттарнă. Çĕр çине Çăлакан килни çинчен чи малтан уйран таврăннă кĕтÿçсем пĕлнĕ. Çавăн хыççăн астрологи карттисем тăрăх Христос килессине тахçанах пĕлтерни пурнăçланнине шутласа кăларнă волхвсем килсе çитнĕ. Тÿпере çутă çăлтăр йăлтăртатса илнине курсан, вĕсем çула тухнă та икĕ çултан Вифлееме çитнĕ.




Анчах çак калавсенче пурте тĕрĕсех-ши? Пуринчен малтан, астрологи пирки Çĕн чĕрĕлÿ саманинчех ку чухнехи астрономипе механика никĕсне хывакансенчен пĕри Иоганн Кеплер, авалхи астрологсем çырнă хутсене пăхса тухнă май, Иудея ăсчахĕ Абрабанель çапла çырса хăварнине тупнă: Турă ярса панă Çÿлти Патша килсе çитни Сатурн тата Юпитер çывхарнипе çыхăннă. Кеплер хăй шутласа çакна палăртнă: çавăн пек çывхарни вăл пирĕн эрăчченхи 7 çулта пулнă.

Иоанн Евангелийĕнче Иисус тăшманĕсем Ăна çапла калаççĕ: Иерусалим чиркĕвне хĕрĕх ултă çул хушши тунă. Паллă ĕнтĕ, ăна пирĕн эрăччехи 20 çул тĕлне тума тытăннă. Çапла вара ку сăмахсене пирĕн эрăччехи 26-27 çулсенчен маларах калама пултарайман. Лука хăйĕн Евангелийĕнче çапла калать: çав вăхăтра Иисус "вăтăр çулта" пулнă, Тиберий император вара 15 çул патшара ларнă. Тухăçри шутпа килĕшÿллĕн, Тиберий патшара ларнин 15-мĕш çулĕ 27 çулхи кĕркуннепе 28 çулхи кĕркунне хушшине лекнĕ. Çак тачă çыхăнман кăтартусем тăрăх та Раштав пуçланнă вăхăт пирĕн эрăччехи 8-7 çулсене пырса тивет.

Юлашкинчен, нумаях пулмасть кăна-ха Прагăри геодези наука-тĕпчев институтĕнче ĕçлекен Йозев Шурань "Вифлеем çăлтăрĕ" ĕç çырса пĕтернĕ. Вăл, пĕлĕвĕпе астроном шутланакан инженер, пилĕк çул хушши питĕ тĕплĕ тĕпчевсем ирттернĕ тата астрономи шутлавĕсем тунă. Вăл пĕтĕмлетнипе килĕшÿллĕн, пирĕн календарьпе шутласан, Иисус Христос пирĕн эрăччехи 9 çулхи чÿк уйăхĕн 22-мĕшĕнче çуралнă, ăна пирĕн эрăри 26 çулăн пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче Хĕрес çумне пăталанă, ун чухне вăл 34 çул та тăватă уйăхра пулнă.

Кирек мĕнле пулсан та, çакă куç кĕрет ĕнтĕ. Пирĕн эрăри VI ĕмĕрте Раштава шутласа палăртнă Кĕçĕн Дионисий манах йăнăш тунă. Çав йăнăш вара пирĕн эрăна - Христос çуралнăранпа шутлакан эрăна палăртмалли вăхăт пулса тăнă. Тĕрĕс марлăхсем пуррине пăхмасăрах, эпир, авалхи пекех, "çăлтăрлă" тата туя вĕçĕнче йăлтăртатакан "вертеплĕ" Христоса тата Вифлеем çывăхĕнчи çĕр хăвăлне кăтартакан куçса çÿрекен театра хирĕç тухма хатĕр. Сăмах май каласан, Вифлеем вăл "çăкăр хули" тени пулать.

Дмитрий ТУМАНОВ.

* Спорт * Спорт * Спорт * Спорт * Спорт * Спорт * Спорт *

## Район чысне хÿтĕлесе

**Иртнĕ çул сирĕн асăрта мĕнпе палăрса юлчĕ? Ф.ГАЙНУЛЛИН, ачасемпе çамрăксен клубĕн директорĕ:**

Малтанах эпĕ шкулсенче физкультурăпа вĕрентессин пахалăхĕ ÿснине палăртасшăн. Çак ĕçре пирĕн клуб пулăшни савăнтарать - вăл ачасене валли шкул тулашĕнчи спорт мероприятийĕсем йĕркелет. Иртнĕ çул пирĕн вунă тĕрлĕ кружоксене икĕ пин ытла ача çÿрерĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ, район ăмăртăвĕсене хутшăнса, кружоксенче илнĕ пĕлÿсем çирĕппине кăтартрĕç.

П.А.Кузьменков ертсе пыракан вырăнти кружока çÿрекен ачасем уйрăмах лайăх хатĕрленсе çитни палăрчĕ. Тури тата Анат Нăрлатри шкулсенчен - Р.А.Рахматуллин тата Ф.Н.Шайхутдинов илсе пыракан кружоксене çÿрекенсем çинчен те çакнах каламалла. Районти ăмăртусенче çĕнтерсе, вĕсем пирĕн клуб чысне республикăра хÿтĕлерĕç. Пирĕн Евгений Яковлев, Ранис Рахматуллин, Айрат Мусин Тутарстан Республикин чемпионĕсен ятне илме тивĕç пулчĕç.

Республикăри I Спартакиадăна хутшăннипе те мухтанма пултаратпăр. Сĕтел çинчи теннис вăййипе эпир республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр, волейбол, баскетбол вăййисен ăмăртăвĕсенче - тăваттăмĕш вырăн. Йĕлтĕр спортĕнче, çăмăл атлетикăра та çитĕнÿсем пур. Çыранçи Чаллăра "Кĕмĕл шăнкăравсем" приза çĕнсе илес тĕлĕшпе йĕркеленĕ наци кĕрешĕвĕн республика ăмăртăвĕсене хутшăнса, Нăрлатри çамрăксем кунта виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Çак çитĕнÿсем пире, педагогсене, савăнтараççĕ, паллах, çапах та ку чикĕ пулманнине эпир ăнланатпăр.

Пирĕн тĕллев - хамăрăн кружоксене çÿреме тата нумайрах ачана явăçтарасси, вĕсен ĕç пахалăхне ÿстересси, ăмăртусем час-часах йĕркелесси, республика ăмăртăвĕсенче район чысне хăюллăн хÿтĕлесси.

## Çĕнĕ çул парни

Шахмат вăййин хăнăхăвĕ шăпах пуçламăш шкулта вăйлă аталанать теççĕ. Ача логикăлла шухăшлама пуçлать, унăн ăстăнĕ, шухăшкăмăлĕ аталанать, вăл хастарланать, хăйĕн ĕçне тишкерме хăнăхать, умне лартнă тĕллеве пурнăçлас тесе тăрăшать. Ачасемпе çамрăксен клубĕнчи кружокра шахматпа шашка вăййисене тĕпчесе выляма вĕренеççĕ. Занятисем икĕ сменăпа иртеççĕ: ирхине 8 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, кăнтăрларан 13 сехетрен пуçласа 16 сехетчен.

Кружока лайăх ĕçлеме кирлĕ пособисем, оборудовани пур.

Çĕнĕ çул тĕлне районти вĕрентÿ пайĕ (заведующийĕ Н.Х.Абдуллин) ятарласа хатĕрленĕ шахматсен икĕ партине кружок валли туяннă.

Фигурăсене пĕчĕк сĕтелсем çине вырнаçтараççĕ. Художество енчен те вĕсем хитре. Çакăн пек шахматсемпе выляма питĕ кăмăллă. Шахматла выляма вĕренес текенсене чĕнетпĕр. Ырă сунса кĕтетпĕр.

А.КОСТИН.

## Саламлатпăр!

*Уксăмлă ялĕнче пурăнакан юратнă аннене Полина Ефимовна АКМУЛИНАНА 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр.*

*Ан чирле, ан ватăл нихăçан,*
*Пул хаваслă, кăмăллă ялан.*
*Эс пурри пире савăнтарать ,*
*Пурăнма вăй-хал парса тăрать.*

*Хĕрĕсем.*

## Пĕлтерÿсем

### *Ентешсем валли парне!*

*Уяв кунĕсенче пирĕн магазин Сире валли пысăках мар парне хатĕрлерĕ. Лотерея вăййи пынă май (1998 çулхи январĕн 14-мĕшĕччен) январĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа 14-мĕшĕччен холодильниксем, кĕпе-йĕм çумалли машинăсем тата газ плитисем 5 процент йÿнерех сутăнĕç. Хулара тата районта пурăнакансене пурне те Çĕнĕ çул ячĕпе тата Раштав уявĕпе саламлатпăр. Хăйсен çывăх çыннисене парне илсе паман çынсем пирĕн пата килессе шанатпăр. Пирĕн адрес малтанхиех: "Техника" магазин, иккĕмĕш хут.*

* * *

*1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр, двигателĕ 06, экспорт варианчĕ, "симĕс сад". Тукай урамĕнчи 64-мĕш çуртра хăть хăш вăхăтра та ыйтса пĕлме пулатı*

* * *

*Чугун çул переезчĕ патĕнчи гаража тара паратпăр. Адрес: Калинин урамĕ, 50.*

* * *

*Гараж сутăн илетпĕр (апат-çимĕç пасарĕ патĕнче пулсан авантарах). Телефон: 5-18-16.*

* * *

*Ильнур Якубович Абдулвалиев ячĕпе панă праваллă енчĕке тупакана тавăрса пама ыйтатăп. Адрес: Советская урамĕ, 189-107.*

* * *

*"ЛАЗ-Турист" автобус сутăнать, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Адрес: Ульяновск хули, Киевская урамĕ, 8-41, телефонсем: 37-28-62, 20-03-15, Филипповран ыйтмалла.*

* * *

*Шалти ĕççене туса пĕтермен коттедж сутăнать, 130 тăваткал метр, мансарда пур, 95 000 тенкĕ, урăх вариантсем те пулма пултараççĕ. Адрес: Московская урамĕ, 5-36.*

* * *

*Çурта тара паратăп. Телефон: 5-14-92.*

* * *

*ВАЗ-21011 автомашина сутăнать. Адрес: Маслозаводская урамĕ, 5.*

* * *

*Тупнă япаласен сĕтелĕ*

*Декабрь уйăхĕнче çăра уççисен çыххине тата плоскогубцы тупнă. Адрес: Линейная урамĕ, 19-3.*

* * *

### *М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет. Пирĕн патра кăна!*

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тÿлевсĕр!*

*Сипленĕ кунсенче, эрнекун, январĕн 16, 30-мĕшĕсенче, районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нăрлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать. Тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нăрлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 856.